25-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 ИЮЛЬ 24 ЭРНЕКУН 171 (6106) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хĕрлĕ Çар валли тырă фончĕ тăвар

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар халĕ йывăр, хаяр çапăçусем туса пырать. Гитлерла мерзавецсем вутпа хĕм витĕр, хăйсен çарĕ пысăк çухатусем тўснине пăхмасăр, пирĕн тăван çĕршывăн пурнăç центрĕсем патнелле çĕмĕрсе кĕме хăтланаççĕ. Пирĕн çĕршыв каллех пысăк хăрушлăх умĕнче тăрать.

Хаяр хăрушлăха хирĕç халăхăн пĕтĕм вăйне пухса тăратмалла. Юратнă тăван çĕршыв фронта ытларах, вăйлăнрах пулăшма ыйтать, тăшмана аркатса тăкса татăклă çĕнтерў тума фронта мĕн кирлине пурне те ытлăнçитлĕн туса пама хушать.

Колхозниксемпе колхозницăсен хĕçпăшалĕ вăл — тырпул. Куллен хĕрўллĕн, ывăнма пĕлмесĕр ĕçленипе тулăх тырпул çитĕнтерни, ăна пысăк пахалăхпа вăхăтра пухса кĕртсе ялхуçалăхĕн продукчĕсене фронтпа çĕршыва ытларах пани колхозсен чыслă ĕçĕ пулса тăрать.

Тăван çĕршыва хĕрўллĕн, чĕререн юратни пĕтĕм совет халăхне ĕçре те, çапăçура та çĕнĕрен пысăк çитĕнўсем тума хавхалантарать, халиччен туман паттăрла ĕçсемпе çĕнтерў тума çĕклет.

Пирĕн республикăри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем çĕршыв оборонин фондне тăвас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем çĕршыв оборонин фондне пиншер пăт тĕштырă, аш-какай, сĕт-çу тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене хывреç.

Пĕр Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем çеç, иртнĕ çултине шута илмесĕр, кăçал оборона фондне 1.376 килограмм аш-какай, 280 центнер тĕштырă, 1.192 çăмарта, 254 килограмм çу панă, оборона фондне хывма тата нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшма 233 гектар тĕштырă акса хăварнă.

Колхозниксемпе колхозницăсен патриотизмла туйăмĕ, вĕсем тăван Хĕрлĕ Çара куллен пулăшса пырассишĕн тăрăшни нумай тĕрлĕ ĕçсенче курăнса тăрать. Иртнĕ хĕлте вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлес, ĕçе пысăк активлăхпа хутшăнчĕç, çакна халĕ те тимлĕн туса пыраççĕ.

Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă совет облаçĕсемпе районĕсенчи колхозсене тăванла пулăшу пама çураки планĕнчен иртте́рсе республикăри колхозсем кăçал 4.000 гектар тĕштырă акса хăварчĕç.

Нумай çĕртен Хĕрлĕ Çар валли тырă фончĕ тăвасси çинчен сĕнўсем килни колхозсенчи ĕçхресченĕсен патриотизмла çĕнĕ çĕкленĕвне кăтартса парать. Хĕрлĕ Çар валли тырă фончĕ тăвас шухăш халăх массисем хушшинчен тухнă.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозниксемпе колхозницăсен шухăш-кăмăлне ырласа, 1942 çулти тырăран Хĕрлĕ Çар валли 145 миллион пăтлă фонд тума постановлени йышăнчĕç. Çак постановленире колхозсем Хĕрлĕ Çар валли тăвакан фонда государствăна обязательнăй йĕркепе тырă паракан гектарсен виçинчен шутласа илсе памаллине кăтартса панă. Çавăн пекех тырă хакне те, ăна памалли йĕркепе майсене те тата ку ĕçо государствăна обязательнăй йĕркепе тырă парас ответлăхпа туса пымаллине те кăтартса панă. Çапла вара Хĕрлĕ Çар валли тырă фончĕ хывасси кашни колхозăн обязанноçĕ пулса тăрать.

Колхозниксемпе колхозницăсем ку постановление пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç. Калинински районри колхозсем, постановление ырласа, Хĕрлĕ Çарăн фондне тырă хывас ĕçе срокчченех тытăнчĕç. Пушкин ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ кунсенче Хĕрлĕ Çар фондне аванс шучĕпе 50 центнер хыврĕ. Хĕрлĕ Çарăн фондне аванс шучĕпе тырă леçес ĕç Сĕнтĕрвăрри тата ытти районсенче те сарăлса пырать. Нумайĕш колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне хывмалли тырра 1942 çулти тырăран срокчченех парса татма пулаççĕ.

Совет халăхĕ хăйĕн Хĕрлĕ Çарне, çĕршывăн ирĕклĕхĕпе, никама пăхăнманлăхне сыхлакан совет воинĕсене вĕçĕ-хĕррисĕр юратать. Гитлерла йыткĕтĕвĕсем тапăнса килнине, халĕ Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тўсĕмлĕн сире-сире пăрахаççĕ, геройла çапăçса тăшманăн войскисене пысăк çухатусем кўреççĕ. Тăшмана тĕпренех çĕмĕрсе тăкас тесен, пĕтĕм совет халăхĕн вăя шеллемесĕр татах та тимлĕнрех ĕçлемелле, фронта нумай хут вăйлăрах пулăшу памалла.

Колхозниксен уйхирте пысăк тухăçлă тырпул ўстерессишĕн, ăна хăвăрт тата пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕртессишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пĕтĕмĕшпех тултарассишĕн нумай хут тимлĕнрех ĕçлемелле. Хатĕрлев организацийĕсен тырă йышăнма хатĕрленмелле.

Хĕрлĕ Çар фондне каякан тырра вăхăтра леçсе парасси—кашни колхозăн чыслă ĕçĕ пулса тăрать. Фронта пулăшассине вăйлатсах пырар! Хĕрлĕ Çара тата çĕршыва тырпул, пахча-çимĕç, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах туса парар!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Июлĕн 22-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Воронеж** районĕнче тата **Цымлянская** районĕпе **Новочеркасск** районĕнче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусем пулман.

* * *

Июлĕн 21-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 100 танкĕпе бронемашинине ытла, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 420 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен склачĕпе горючи складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй 60 орудие пусарса лартнă, чугунçул çинчи 3 состава çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 2 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç активлăн çапăçнă. Пирĕн чаçсем чугунçул çинче ларакан халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ те, гитлеровецсем вăйлăн хирĕç тăнине сире-сире, малалла куçса пынă. Пĕр кун хушшинче пирĕн танкистсем противникăн 15 танкне тата унăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн танкистсем нимĕçсенчен ытти трофейăсемпе пĕрле 32 оруди, 137 пулеметпа автомат тата 20.000 снаряд тытса илнĕ. Противника пирĕн пехотинецсем питĕ пысăк çухатусем тўстереççĕ. Попов юлташ командир пулса тăракан пĕр часть кăна юлашки çапăçусенче 45 оруди, 2 танк, 41 пулемет, 14 миномет, 3 радиостанци, нимĕçсен пĕр самолетне экипажĕпе пĕрлех тата 16 автомобиль тытса илнĕ. Пирĕн авиаци çĕр çинчи вăйсене активлăн пулăшса пырать. Пĕр кун хушшинче пирĕн летчиксем 6 танк, 50 автомашина, 14 оруди пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 5 самолетне персе ўкернĕ.

* * *

Пирĕн войскăсем Новочеркасск районĕнче хаяррăн çапăçнă. Пĕр участокра пирĕн летчиксем тăшманăн танкĕсемпе автомашинисен колонни çине тата противникăн пехоти пухăнса тăнă вырăна бомбăсем пăрахнă. Сывлăшран пырса тапăнса темиçе танк, войскăсемпе боеприпассем тиенĕ 57 автомашинăна пĕтерсе тăкнă, горючи тултарнă 6 автоцистернăна çунтарса янă, гитлеровецсен чылай пысăк ушкăнне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç икĕ кун хушши йывăр çапăçусем туса пынă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 1.300 салтакпа офицер ытла вилнĕ. Нимĕçсенне 14 танк, 9 оруди, 30 пулемет ытла тата 40 автомашина пĕтерсе тăкнă. Пирĕн войскăсем те чылай пысăк çухатусем тўснĕ, иккĕмĕш кунне вара каçпала, командовани хушнă тăрăх, çĕнĕ позицисем патне чакнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă тата артиллерирен перкелешнĕ. Фронтăн пĕр участокĕнче пирĕн боецсен пĕр ушкăнĕ, малалла вирлĕн ыткăнса, пĕр высотăна тытса илнĕ. Гитлеровецсем темиçе хут контратака тунă; çав высотăшăн пынă çапăçусенче вĕсен 500 салтакпа офицера çити вилнĕ. Ытти участоксенче сывлăшран бомбăсем пăрахса тата артиллерирен персе нимĕçсен 10 дзотне çĕмĕрнĕ, темиçе батарейипе темиçе орудине пĕтерсе тăкнă, противникăн боеприпассем усракан складне сирпĕнтерсе янă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, нимĕçсен 13 самолетне ўкернĕ, 8 самолетне сиенленĕ.

* * *

Белоруссири партизансен. Ш. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕç оккупанчĕсене хирĕç виçĕ кун хушши хаяррăн çапăçнă. Партизансем малтан каялла чакса пынă, гитлеровецсене халран ярса пынă, унтан вара вĕсене ăнăçлăн атакăланă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 200 салтакпа офицер ытла вилнĕ. Унсăр пуçне оккупантсен 3 танкĕпе 10 автомашинине çунтарса янă.

* * *

Калинин облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Н. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ чугунçул станцине пырса тапăннă. Партизансем 72 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, горючи складне, 42 вагон тата 7 автомашина çунтарса янă. Совет патриочĕсем противникран 1 пулемет, 18 винтовка, темиçе ещĕк патрон тата ытти тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕç салтакне Якоб Майера Оберцоллингран çапла çыраççĕ: «Иртнĕ эрнере 2 француз тарнă, вĕсенчен пĕри пирĕн патăрта, тепри кўршĕре ĕçлетчĕ. Халĕ пирĕн малтанах панă 4 çынтан пĕр çын çеç тăрса юлчĕ ăнтĕ.. Французсем пуртекунтан тарма шухăшласа çўреççĕ. Вĕсем киле, Францие каясшăн. Французсем тарса пĕтсессĕн пирĕн патăрта кам ĕçлĕ-ши вара?»...

* * *

Польша патриочĕсем пĕр станцире чугунçул çинчи 3 цистернăран бензин юхтарса кăларнă та ăна вут тĕртнĕ. Пĕтĕм состав тата нимĕç оккупанчĕсен тумтир тавраш хунă склачĕ çунса кайнă. Тепĕр районра нимĕçсен транспортнăй самолечĕ çĕр çине ирĕксĕр анса ларнă. Патриотсем нимĕç самолечĕн экипажне персе вĕлернĕ, самолетне сирпĕнтерсе янă.

Июлĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерў

Июлĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче тата **Цымлянская** районĕпе **Новочеркасск** районĕнче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Воронеж районĕнче вăйлă çапăçусем пынă. Пирĕн войскăсем противника хĕссе, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Пирĕн танкистсем противникăн оборона рубежне атакăланă та нимĕçсен 3 танкне, 5 бронемашинине, 14 автомашинине, груз тиенĕ 60 лавне тата 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçăн боецĕсем артиллерирен вăйлă персе тăрса хатĕрленнĕ хыççăн противник хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă, ăна юханшыв çумне хĕстерсе лартнă. Хаяр çапăçура нимĕçсен 750 салтакĕпе офицерне ытла, 6 танкне, 10 орудине тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем нумай пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Нумай гитлеровец шыва путнă.

* * *

Новочеркасск районĕнче пирĕн войскăсем оборонăллă çапăçусем туса пынă. Нимĕçсен атакисене сире-сире ярса, пирĕн боецсем тăшмана халран яраççĕ, ăна пысăк çухатусем тўстереççĕ. Пĕр подразделенин участокĕнче кăна пĕр талăк хушшинче нимĕçсен 470 салтакĕпе офицерне, 5 танкĕпе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 17 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра артиллеристсем противникăн танкĕсен 4 атакине сирсе янă. Нимĕçсен 17 танк тата 200 салтакпа офицера çити пĕтнĕ.

* * *

Калинин фронтĕнче артиллерирен перкелешнĕ тата разведчиксем сăнаса шыраса çўренĕ. Старши лейтенант Барабанщиков тата старши лейтенант Демченко командирсем пулса ертсе пыракан икĕ отряд—разведка тăвакан отрядсем—Б. тата П. пункчĕсенче нимĕç гарнизонĕсене аркатса тăкнă. Пирĕн боецсем 250 салтакпа офицера ытла вĕлернĕ, вĕсем хушшинче нимĕçсен пехотнăй полкĕнчи батальонăн командирĕ те пулнă. Пирĕннисем 8 оруди, 12 пулемет, 3 миномет, радиостанци пĕтерсе тăкнă тата противникăн боеприпассем усракан складне сирпĕнтерсе янă. Трофейăсем тытса илнĕ тата темиçе çынна тыткăна илнĕ. Стариков юлташ командир пулса тăракан подразделени, тăшманăн тылĕнче кĕрешекенскер, 7 кун хушшинче противникăн чугунçул çинчи 10 эшелонне ўпĕнтерсе янă.

* * *

Ленинград фронтĕнче Горшков юлташ командир пулса ертсе пыракан батарея финн салтакĕсен пĕр ушкăнĕ çине ăнăçлăн пенĕ. Темиçе вуншар белофина вĕлернĕ тата амантнă. Воронич юлташăн подразделенийĕнчи артиллеристсем противникăн орудине пĕтерсе тăкнă тата 30 гитлеровецран кая мар вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Чернигов облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен С. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен роти çине кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Партизансем вуншар гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 8 пулемет, 2 миномет, 80 винтовка тата боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 87-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 85-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак—поляк Альфонс Х. çапла каласа панă: «Нимĕçсем мĕнпур поляксене хăйсен тарçисем тесе шутлаççĕ. Польшăра пурăнакан темиçе вуншар пин çынна Германие ирĕксĕрле ĕçсем ĕçлеме вăйпа илсе кайнă. Поляк хресченĕсене çĕр çинчен хăвалаççĕ, вĕсене иртен пуçласа тĕттĕм пуличченех нимĕçсем валли ĕçлеттереççĕ. Пĕртак айăпа кĕнĕшĕнех тĕрмене хупаççĕ е концентрацилле лагĕре яраççĕ. Германи çарне мобилизациленĕ поляксем Гитлершăн çапăçасшăн мар».

* * *

Франци патриочĕсем куллен вуншар нимĕç оккупантне вĕлереççĕ. Нумаях пулмасть Парижри пĕр кафере граната çурăлса кайнипе 8 нимĕç офицерĕ вилнĕ. Дьеппри хула садĕнче 4 нимĕç салтакĕн виллине тупнă.

* * *

Борисов юлташ директор пулса тăракан заводăн коллективĕ авиаци моторĕсем ытларах туса кăларассишĕн ăнăçлăн кĕрешет. Лебедь юлташ ертсе пыракан цехра детальсем туса кăларассине икĕ хут ўстерни. Максимов юлташ начальник пулса тăракан цехра пĕр вăхăтрах 12 детале якатма тытăннă. Мотора пухса лартма кирлĕ вăхăт халĕ нумай кĕскелнĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Финоргăнсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн услови̇йĕсенче кăтартса панине шута илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕ социализмлă ăмăртура мала тухакан рай(гор)финотделсене пама çакăн пек премисем палăртса хунă.

Пĕрремĕш вырăна йышăнакан финоргăна Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне параççĕ тата районри чи лайăх финанс работникĕсене премилеме 12.000 тенкĕ укçа параççĕ.

Иккĕмĕш вырăна йышăнакан финоргăна 8.000 тенкĕ укçа параççĕ.

Виççĕмĕш вырăна йышăнакан финоргăна 5.000 тенкĕ укçа параççĕ.

Социализмлă ăмăртура мала тухнă финоргăнсене преми парасси Совнарком решенийĕ тăрăх кашни кварталтах пулса иртет, анчах квартал иртнĕ хыççăнхи уйăхăн 15-мĕш числинчен кая юлмалла мар. Преми памалли кандидатсене Чăваш АССР Наркомфинĕ тата финансла банк работникĕсен Союзĕн Обкомĕ палăртаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри финанс работникĕсене пурне те социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма, çапла вара çĕршыв оборони валли укçа-тенкĕ парса тăрас задачăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыма чĕнет.

Государствăна тырă параççĕ

КАНАШ. Районри колхозниксемпе колхозницăсем нимĕç оккупанчĕсене çапса аркатас шухăшпа пурăнаççĕ. Геройла Хĕрлĕ Çара ытларах та ытларах пулăшу пама тăрăшаççĕ. 1942 çулти обязательство шучĕпе государствăна тырă хальтерех пани уборка ĕçĕсене нумай çăмăллатать. Çавна шута илсе районри колхозсем государствăна васкасах тырă параççĕ. Çак кунсенче Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз государствăна 157 центнер тĕштырă леçсе пачĕ. Çавăн пекех Асхвари «Хĕрлĕ хĕм» колхоз та 102 центнер тĕштырă панă.

И. МАКСИМОВ.

* * *

СОВЕТСКОЕ. «Çĕнĕ пурнăç» колхоз 1942 çулти обязательствăна тултарас шутпа государствăна 118 центнер тырă пачĕ, çавăн пекех «Динамо» колхоз та хатĕрлев пунктне 70 центнер леçрĕ.

Н. ПАХОМОВ.

Железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри кунĕ умĕн

Тăван çĕршывăн чугунçулĕсем çинче ĕçлекенсем железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри кунне — августăн 2-мĕшне — производствăра çĕнĕ çĕнтерўсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Вăл куна паллă тума Елчĕк районĕнчи колхозсем çав кун ячĕпе Ленинград хулинчи железнодорожниксем патне парнесем ярса параççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз (колхоз председателĕ Мартынов юлташ) 24 пăт тулă çăнăхĕ, 11 пăт аш-какай ярса парать. Çавăн пекех Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз 20 пăт тулă çăнăхĕ, 10 пăт аш-какай, «Осоавиахим» колхоз 10 пăт тулă çăнăхĕ, 9 пăт аш-какай ярса параççĕ. Июлĕн 22-мĕш тĕлне çак ĕç валли районĕпе пурĕ 200 пăта яхăн тулă çăнăхĕ, 75 пăт аш-какай пухăннă. Ленинград хулинчи железнодорожниксем валли парнесем пухас ĕç кулленех вăйланса пырать.

П. НИКОЛАЕВ.

ЕЛЧĔК. («Чăваш Коммуни» корр.).

* * *

ПЕПРЕÇ. Буинск разъездĕнче ĕçлекенсем Ленинград железнодорожникĕсем патне парне яма 100 çăмарта, 25 пачка махорка, 1 килограмм çу пачĕç.

Н. Р.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Çĕнĕ çĕнтеру

Икĕ хут Хĕрлĕ ялав илнĕ завод коллективĕ (директорĕ Бенский юлташ, партбюро секретарĕ Поддубко юлташ, завком председателĕ Блошенко юлташ) уйăхран уйăха лайăхрах ĕçлет. Завод пĕр халăх комиссариачĕ валли продукци туса памалли июль уйăхĕнчи задание 20 кун хушшинчех тултарч[...] Ĕнер, июлĕн 23-мĕшĕнче, завод хăй[...] уйăхри программине пурнăçа кĕртр[...] Халĕ коллектив продукцие уйăхр[...] планран ирттерсе туса кăларассиш[...] кĕрешет.

Канашри вагонсем юсакан завода Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне пани

Завод коллективĕн митингĕ

Июлĕн 22-мĕшĕ — фронтпа çĕршывшăн пархатарлăн ĕçленĕ тепĕр кун вĕçленчĕ. Заводри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем митинга пухăнчĕç.

Митинг пухăнса çитнĕ. Трибуна çине ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕсем Чарыковпа Крылов юлташсем, Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕ Белолипецкий юлташ, Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн представителĕ Егуткин юлташ, чугунçул завочĕсенче ĕçлекенсен профессиллĕ Союзĕн Центральный Комитечĕн представителĕ Игнатьев юлташ, Хусан чугунçул управленийĕн политотдел представителĕ Брагин юлташ, завод руководителĕсем, паллă стахановецсем, ВКП(б) Канаш хула комитечĕн ертсе пыракан работникĕсем улăхаççĕ.

Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне панă ятпа пухăннă митинга заводри партбюро секретарĕ Сорокин юлташ кĕске сăмах каласа уçать.

Малтанхи сăмаха Хĕрлĕ Çарăн представительне гварди лейтенантне орденоносец Савинов юлташа параççĕ.

— Завод коллективĕ, — тет мухтавлă Хĕрлĕ Çар представителĕ, — паян тивĕçлипе савăнать. Июнь уйăхĕнче эсир мухтава тивĕçлĕ ĕçлерĕр. Анчах çитес уйăхсенче татах та лайăхрах ĕçлессине, фронтпа çĕршыва ытларах продукци парассине шанатпăр. Эпир сире, хăмăр енчен, Сталин юлташăн приказне — 1942 çулта нимĕçсен фашистла войскисене тĕппипех аркатса тăкма хушакан приказа чыслăн пурнăçлăпăр, тесе шантаратпăр.

Митингра пулнисем ку сăмахсене тăвăллăн алă çупнипе кĕтсе илеççĕ, оркестр «Интернационал» вылять.

— Юлташсем! — Малалла калать лейтенант Савинов юлташ, — ВЦСПСпа Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ хушнă тăрăх, сире эпĕ Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне паратăп.

Завод начальникĕ Поздняков, партбюро секретарĕ Сорокин тата за[...] председателĕ Кисленко юлташсем [...]лĕ ялава хăйсен аллине илеççĕ.

— Çакă ялава эпир хамăр а[...] яланах çирĕп тытăпăр. Гитлерăн [...] кĕтĕвĕсене татăклăн аркатса тăк[...]нех, тăван çĕршыва нимĕç оккупа[...] сенчен пĕтĕмпех ирĕке кăларич[...] вăя шеллемесĕр, вăхăта пĕлмесĕр ĕ[...] пĕр,—тупа тăвать Поздняков юл[...] завод коллективĕн ячĕпе.

Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн пред[...]ставителĕ Егуткин юлташ сăмах илет[...] Вăл заводра ĕçлекенсене Халăх Комис[...]сариачĕн ячĕпе саламлать. Ялава ал[...]ра яланлăха хăварас тесен, питех т[...] тăрăшса ĕçлеме кирли çинчен, ça[...] ялавшăн вуншар заводсем кĕрешни [...] çинчен калать. Унпа пĕрлех Егуткин юлташ завод коллективĕн туса кăларакан продукци пахалăхне кунран кун лайăхлатса пыма кирлине астутарать.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ заводри рабочисене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене парти Обкомĕпе Чăваш АССР правительстви ячĕпе саламлать.

— Хĕрлĕ ялава илни,—тет вăл завод коллективне саламласа,—эсир хальхи йывăр вăхăта туйса ĕçлени çинчен калать. Пысăк чыспа хисепе тивĕçлĕ пулни сире малашне татах та тухăçлăнрах та лайăхрах ĕçлеме хушать.

Çавăн пекех саламлă сăмахсем чугунçул завочĕсенче ĕçлекенсен профессиллĕ Союзĕн Центральный Комитечĕн представителĕ Игнатьев тата Хусан чугунçул управленийĕн политотдел представителĕ Брагин юлташсем калаççĕ.

Ответлă сăмахсемпе заводри работниксем тухаççĕ. Вагонсем юсакан цехри 6-мĕш комплекс начальникĕ Рязанцев, паллă стахановец Дохленко т. ыт[...] юлташсем хăйсен ку таранччченхи ĕçĕсемпе çитĕнĕвĕсем çинчен каласа параççĕ.

Митингра пулнисем пысăк çĕкленўпе халăхсен çулпуçĕ, совет çарĕсен полководецĕ Сталин юлташ патне саламлă телеграмма ячĕç.

График тăрăх ĕçлетпĕр

КУСЛАВККА, июлĕн 22-мĕш. (**Телефонпа**). Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннăранпа комбинат талăкри ĕç графикне ку таранччченхинчен тикĕсрех пурнăçлама тытăнчĕ. Комбинатри пур цехсем те графика производствăн тĕп законĕ вырăнне хураççĕ. Уйрăмах ку тĕлĕшпе Симонов юлташ ертсе пыракан цех палăрса тăрать. Цех талăкри графика тăтăшах пурнăçа кĕртсе пырать. Çавăнпа кунта ĕç тухăçлăхĕ те пысăк. Цех коллективĕ июль уйăхĕн малтанхи çурринчи плана 111 процент тултарчĕ. Рабочисенчен чылайĕшĕсем хăйсен нормисене ирттерсе тултараççĕ. Çамрăк рабочи Желангин, çĕнĕ работница Храмкова юлташсем кулленхи нормăна яланах 200 процент тултараççĕ. Цехри парторганизаци секретарĕ Н. Аверин юлташ, ăмăртăва тивĕçлипе ертсе пынипе пĕрлех, хăй икĕ çын тухăçлăхĕпе ĕçлет.

Н. ПЕТРУЧЕНКО.
Комбинатри партбюро секретарĕ.

Цехра нормăна тултарман рабочи çук

Шупашкарти «Красный кустарь» артелĕн ут таврашĕсем тăвакан цехĕ социализмлă ăмăртура лайăх ĕçлет. Цехри рабочисем пурте хăйсен нормисене ирттерсе тултараççĕ, хĕрарăмсенчен те нормăна 120 процентран кая тултаракан çук. Филиппова, Григорьева, Захарова работницăсем кашниех нормăна 250 процент тултараççĕ. Çавăн пекех пысăк тухăçлăхпа Платонова, Демьянова тата Аникина хĕрарăмсем ĕçлеççĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарăн начальствующи тата рядовой составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешў фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа геройлăх кăтартнăшăн çаксене **Ленин** орденĕпе **«Золотая звезда»** медаль парса, **Совет Союз Геройĕн** званине парас:

1. Лейтенанта Павел Васильевич **Лаптева.**
2. Старши сержанта Петр Тимофеевич **Лихачева.**
3. Красноармеецa Лазарь Хаймович **Наперника.**
4. Красноармеецa Сергей Иванович **Севостьянова.**
5. Старши лейтенанта Петр Дмитриевич **Хренова.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 çулти июлĕн 21-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Сержанта Виктор Петрович Мирошниченкăна Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешў фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа геройлăх кăтартнăшăн сержанта Виктор Петрович Мирошниченкăна **Ленин** орденĕпе **«Золотая звезда»** медаль парса, **Совет Союз Геройĕн** званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 çулти июлĕн 21-мĕш.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Воронеж районĕнчи çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Пирĕн войскăсем хăйсем сĕнтерсе илнĕ рубежсем çинче противника хирĕç хаяррăн çапăçаççĕ, хăйсен позицийĕсене лайăхлатса малалла куçаççĕ. Фашистсем вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Чи кирлĕ участоксенче тăшман артиллерипе миномётсем йышлăн пухса тăрататъ. Пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕçсем техникăпа чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен çавтерсе пысăк çухатусем тӳснĕ. Тытса илнĕ документсемпе тыткăна лекнисем кăтартса панисенчен гитлеровецсем Воронеж хулишĕн пыракан кĕрешӳре питĕ пысăк сиен курни паларать.

Хула патне пымалли вырăнсенче пирĕн чăссем тăшманăн нумай полкĕсемпе дивизийĕсене аркатса тăкнă. Нимĕçсен 168-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи -мĕш полкăн пĕрремĕш батальонĕн пĕрремĕш ротăран тыткăна лекнĕ ер-фельдфебель Жауль Порек çапла каласа панă:

«Икĕ кун хушшы наступленилле çапăçусем туса пынă хыççăн пирĕн ротăра 110 çынран 40 çын кăна тăрса юлчĕ. Виççĕмĕш кунĕнче вырăссем пире хирĕç вăйлă контратака турĕç. Çав атакăсене сирсе пынă чухне пирĕн татах çын пĕтрĕ. Ивăр аманнисем хушшинче рота командирĕ обер-лейтенант ...индлер та пулчĕ. Ротăпа кӳршĕри подразделени хушшинчи çыхăну татăлчĕ, вăл подразделени те пирĕннинчен лайăх лару-тăрурах пулман. Çав вăхăтра вырăссем тăтăшах хĕссе пычĕç. Эпир вара, Донăн хĕвелтухăç çыранĕ çинче юлма малашне май çук тесе, шурлăхсем урлă хĕвеланăç çырана каçма тытăнтăмăр. Эпир çыран хĕррине çывхарса пынă чухне пирĕн çине красноармеецсем пеме пуçларĕç. Пĕр-пĕрне хире-хирĕç персе тăнă çĕрте 16 çын вилчĕç тата аманчĕç, эпĕ ыттисемпе пĕрле тыткăна лекрĕм. Çак нашкал çухатусем пирĕн пĕрремĕш рота кăна мар, дивизин ытти роткисем те тӳсеççĕ».

Пирĕн чăссем П. пункта çавăрса илсе, нимĕçсен каялла чакмалли çулне татнă. Фашистсем вăйлăн хирĕç тăнă, кашни çурта хаяррăн хӳтĕлеме хăтланнă. Анчах çакна пула фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсем, нимĕçсен техники татах та ытларах пĕтсе пынă кăна. Халăх пурăнакан пунктăн хĕррисемпе урамĕсенче фашистсемпе ларшасен виллисем, автомашинăсемпе орудисен, минометсемпе пулеметсен çĕмрĕкĕсем купаланса выртса юлнă. Нумай трофейăсем тытса илнĕ.

Совет войскисен активлăхĕ вăйланнипе пула тата фашистла дивизисен çухатăвĕсем ӳссе пынипе пула противник юханшыв хушшинчи кĕрешӳ мĕнпе пĕтесси пирки шикленет. Пирĕн боецсем хĕссе пынипе тăшман пур майсемпе те чарса лартма тата хăйĕн позицийĕсене çирĕплетме тăрăшать. Фронтăн пур участокĕсенче те нимĕçсем ĕнер тата паян иртен пуçласах çĕр чавса укрепленисем, дотсемпе дзотсем тунă, çапăçу пулмалли хире минăсем лартнă. Гитлеровецсем Воронеж районĕ патне резервсем тăтăшах илсе пырса тăраççĕ. Кунта Румынин 17-мĕш пехотнăй дивизийĕ килсе çитнĕ. Тыткăна лекнисем çапла кăтартса параççĕ: нимĕçсем кунта хăйсем тытса илнĕ çĕршывсенче пухса йĕркеленĕ çар чăçĕсене те куçара-куçара килеççĕ.

Воронежа хӳтĕлекенсем юханшыв хушшине нимĕçсенчен тасатаççĕ, вĕсене Дон леш енне сирсе пăрахаççĕ.

Противникăн çухатăвĕсем сехетрен сехетех ӳссе пыраççĕ. Пирĕн чăссем тăшмана сисĕнмеллех хăватлăн пырапыра çапаççĕ.

Г. КРЫЛОВ.

Тăшман вăйлăрах хĕсме тытăнать

КАНТĂР ФРОНЧĔ, июлĕн 21-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Противник çапăçăва кашни кун çĕнĕ вăйсем кĕртсе пырать. Нимĕçсен танкĕсем хăйсен пехоти валли коридор туса парасшăн. Танксем атака тăвас умĕн яланах артиллери вăйлăн персе тăрать тата нимĕçсен бомбардировщикĕсем пирĕн оборонăн малти хĕрри çине пырса тапăнаççĕ.

Пирĕн пĕр рота йышăнса тăракан позицие хирĕç нимĕçсем вунтăр танк янă. Çав танксене противотанковăй пăшалсенчен вăйлăн персе кĕтсе илнĕ Темиçе машини пĕтсен, гитлеровецсем каялла чакнă. Вĕсен тепĕр атаки те ăнăçлă пулман.

Тепĕр подразделенин участокĕнче гитлеровецсем пирĕн войскăсем вырăнаçса тăнă çĕре шала кĕрсе каяс тесе тăватă хутчен атакăланă. Çав атакăсене пурне те сирсе янă, нимĕçсене пысăк çухатусем тӳстернĕ. Пирĕн боецсем пĕр кун хушшинче ытык вĕççĕн темиçе хут контратака туса, кăçалапа хăйсен малтанхи позицийĕсене çĕнĕрен йышăнса илнĕ.

Волконскипе Мельниквăн çамрăк бронебойщикĕсем патнелле вунă танк ытла пынă. Пирĕннисем малтанах персе пăллă тунă вырăна çитсен, пирĕн боецсем çав танксем çине противотанковăй пăшалсенчен пеме тытăннă. Виçĕ машинăна персе çĕмĕрнĕ, ыттисем каялла çавăрăнса кайнă.

Тăшман ытла та пысăк çухатусем тӳсет пулин те, вăл малаллах талпăнать, вăйлăрах хĕсме тытăнать.

И. ЛАПОНОГОВ.

Тырпулсене вăхăтра, пĕр тăкаксăр пухса кĕртер

Хире тухма хатĕр

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче те пирĕн колхоз кăçал çуракинчи ĕçсене пысăк тимлĕхпе турĕ. Çурхи тырăсене эпир кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа акса хăвартăмăр. Нумай колхозниксем кăçал питех те паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Çум çумлас, çĕрулмисене купалас, махорка калчисене тимлĕн пăхса ӳстерес тата кĕрхи тырăсене акма хатĕрленес ĕçсене колхозниксем тимлĕн туса пыраççĕ.

Кăçал эпир пур йышши тырăсем те, çавăн пекех пахча-çимĕçсем те паха та пысăк тухăçлă пулĕç тесе шутлатпăр. Ку вăл пирĕн ĕç ăнăçлăн пулса пынинчен те уççăнах курăнать. Улăхри утăсене колхоз 70 гектар çинчен ăнăçлăн çулса пуçтарса кĕртрĕ. Вылăх-чĕрлĕхĕн паха апатне капансене тирпейлĕн хывса лартрăмăр. Утă çулнă çĕрте колхозниксем организованно ĕçлерĕç. Тухăçлăн ĕçлеме колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй туни питех те пысăк пулăшу пачĕ. Колхозниксем ĕçре пĕр-пĕрне ăмăртаççĕ.

Тырпулсем питех те хӳхĕм ӳсеççĕ. Часах вĕсене пуçтарса кĕртес тата çапас вăхăт та çитет. Уборкăна тухма колхоз тимлĕн хатĕрленет. Пирĕн колхозăн жнейка (пĕрре çеç тата пĕр сложнăй молотилка пур. Вĕсем ĕçе тытăнма хатĕр лараççĕ. Тырпул вырас ĕçре жнейкăпа эпир туллин усă курма шутлатпăр. Ăна валли участоксем те палăртса хутăмăр. Анчах та пирĕн кăçал алăпа та нумай вырма лекет. Çавăнпа халĕ кĕреплеллĕ çавасене çителĕклĕ таранах тума ятарласах çынсем уйăртăмăр; вĕсем ĕнтĕ кĕреплеллĕ çавасем çителĕклĕ турĕç, çурласене шăлласа хучĕç.

Тырпула кăçал эпир вырнă хыççăнах çапма тытăнатпăр, государствăна чи малтанхи паха тырра пама хатĕрленетпĕр. Сложнăй молотилка тата унăн двигателĕ юсавлă, вĕсене итем çине вырнаçтарса лартнă. Ăна ĕçлеттерме кирлĕ горючие хатĕрлетпĕр.

Кăçал пирĕн уйсенче уйрăмах пăрçа-ясмăк тухăçлăн ӳсет. Вĕсене эпир çулнă хыççăнах пуçтарса çапса хуратпăр. Ку ĕçе пăрçа-ясмăк ӳснĕ участоксенчех тăватпăр. Пăрçа йышши культурăсем купара тăма юратмаççĕ, вĕсене çийĕнчех çапса пуçтармалла.

Колхозниксемпе колхозницăсем кăçалхи уборкăна пĕтĕм вăя хурса хатĕрленеççĕ. Ялхуçалăхĕнчи ĕçсене ăнăçлăн ирттерни хамăрăн чаплă Хĕрлĕ Çара нумайрах тырпул, аш-какай, сĕт-çу туса пама май кӳрет. Çакă вăл урса кайнă гитлерла фашистсен çарне хăвăртрах пĕтерсе тăкма пулăшнă çĕре кайнине эпир, колхозниксем, лайăх ăнланатпăр. Çавăнпа паянхи кун колхозра кашни колхозникпе колхозница ĕçе тимлĕн тума тăрăшать, пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçлет.

И. НИКОЛАЕВ.

Калинински районри «Красноармеец» колхозăн председателĕ.

Уборкăна тухма хатĕрленсе çитессишĕн

ÇĔРПУ. Çак кунсенче Чурачăкра колхоз председателĕсемпе ялсовет председателĕсен тата уйхир бригадирĕсен подрайоннăй канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура райсовет исполкомĕн председателĕ Хабаров юлташ ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление пурнăçа кĕртесси çинчен каласа ăнлантарчĕ. Канашлура районри хăшпĕр колхозсен председателĕсем уборкăна хатĕрленес ĕç çине ответсăрла пăхнине палăртрĕç. Кăçалхи çул, иртнĕ çултипе танлаштарсан, çанталăк çумăрлăрах тăрать. Çакă ĕнтĕ уйри тырпула пухса кĕме лайăх хатĕрленсе тухма хушать. Ялхуçалăх машинисене юсамалла, витнĕ итемсем тумалла т. ыт. те.

«Заря», «17-й партсъезд», «Пучах» колхозсем уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе начар мар ĕçлеççĕ. Ку колхозсем витнĕ итемсене юсарĕç, тасатрĕç, уборкăра кирлĕ пулакан машинăсене юсас ĕç те хĕрӳллĕ пырать. Анчах та хăшпĕр колхозсенче («Вучах», «Шумашар», «Броневик», «Красная армия» колхозсенче) витнĕ итемсем çĕнĕ тырра йышăнма хатĕр мар-ха. Ĕç вăйне тĕрĕс организацилеме пĕлменнине пула «Вучах», «Шумашар» колхозсем уборкăна хатĕрленессине те, пахча-çимĕçсене çумкурăкĕсенчен тасатассине те кая хăварса пыраççĕ. «Шумашар» колхозăн çĕрулмийĕ пĕтĕмпе çумкурăкĕсен айне пулнă. «Вучах» колхозра хăшпĕр колхозниксем кăнтăрлахи вăхăта та урам хушшинче çӳресе иртереççĕ. Çав вăхăтрах çурхи тырăсемпе çĕрулми тата табак çумкурăк айне пулнă. Ĕçкунĕсен минимумне тултарса пыман çынсем колхозра чылай.

Партипе правительствăн постановленийĕ тăрăх уборкăна тухиччен ĕç минимумне тултарса пыман е уборкăна тухман колхозниксене аванс шучĕпе тырпул памалла мар. Анчах та çав асăннă колхозсенчи руководительсем вăл постановление пăхăнса ĕçлемеççĕ. Ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксенех аванс шучĕпе тырпул параççĕ.

«Броневик» колхозра та ĕç дисциплини тивĕçлĕ вырăнта мар. Иртнĕ çулта ку колхозра колхоз ĕçне хутшăнман, пĕр ĕçкунĕ те туман колхозниксенех аванс шучĕпе тырă панисем пулнă. Иртнĕ çулта тунă йăнăшсене кăçал та тăваççĕ. Çавăнпа та колхоз нумай ĕçсемпе кая юлса пырать.

Çак çитменлĕхсене халех пĕтерес пулать. Уборкăна пур енчен те лайăх хатĕрленсе çитсе тухас пулать.

М. ЯКОВЛЕВ.

Куçса килнĕ хĕрарăмсем тăрăшса ĕçлеççĕ

ÇЕМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри колхозсенче отечественнăй вăрçă пыракан вырăнсенчен куçса килнĕ çемьесем сахал мар. Вĕсенчен хăшпĕрисем колхоз производствинче малтанхи хут кăна ĕçлеççĕ. Çапах та вĕсем ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Мăн Улхаш ялсоветĕнчи «Подборное» колхозра куçса килнĕ çемьесенчен пурте тенĕ пекех колхоз ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Уйрăмах кунта хĕрарăмсем малта. Бротская, Ясина, Петрова юлташсем пур ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ. Çум çумланă çĕрте вĕсем кашни кун нормăсене иртерсе тултарса пычĕç.

Тăван ялсоветĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозра тĕрлĕ çĕртен куçса килнисем 14 çемье шутланать. Вĕсенчен чылайĕшĕсен арçынĕсем фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешеççĕ.

— Эпир упăшкасене çакăн пек наказ патăмăр: эсир фронтра нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн çапăçăр, эпир тылра пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе сире çĕнтерӳ тума пулăшăпăр, терĕмĕр. Халĕ акă стахановла ĕçленипе фронта пулăшатпăр, — теççĕ куçса килнĕ хĕрарăмсем.

Мария Ванчикова çемьи (ывăлĕ тата хĕрĕ) иртнĕ çулта виççĕн 215 ĕçкунĕ тунă. Кăçал вĕсем татах та пысăкрах хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Кирек мĕнле ĕç хуш вĕсене, пурне те вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçлаççĕ вĕсем. Çавна пула ĕнтĕ ку çемье кăçал çур çул хушшинчех 400 ĕçкунне яхăн тунă. Унăн колхоз правленийĕ Ванчикова юлташ çемьине аванс шучĕпе 60 пăт тырă пачĕ.

Çак колхозрах куçса килнĕ Л. Кириллова юлташ та стахановла ĕçлет. Вăл кăçал ялхуçалăх ĕçĕн пĕрремĕш черетĕнче обязательнăй йĕркепе тумалли ĕçкунĕсен минимумне икĕ хут ытла иртерсе пурнăçланă. Унăн икĕ ачи те колхоз ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Ку çемье кăçал пĕтĕмпе 193 ĕçкунĕ тунă та ĕнтĕ. Вĕсем те аванс шучĕпе 16 пăт тырă илнĕ.

«Комбайн», Ворошилов ячĕпе тăракан т. ыт. колхозсенче те куçса килнĕ хĕрарăмсем колхоз ĕçне активлăн хутшăнаççĕ.

Тырра машинăсемпе ытларах вырмалла

ШАХАСАН. (Телефонпа, хамăр корр.). Энтриялĕнчи «Герой» колхозăн кăçал хăйĕн уйхирĕнчен пучахлă культурăсем пурĕ 750 гектар пухса кĕртмелле. Çакна вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртме колхозăн пур майсем те пур. 4 жнейка, 377 çын, лашасем те çителĕклĕ. 200 гектар çинчи тырра комбайнпа вырма палăртнă.

Колхоз уборкăри ĕçсен планне тунă. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление сӳтсе явнă хыççăн колхозниксем уборкăна хатĕрленес ĕçе татах та тимлĕрех туса пыма тытăнчĕç.

Колхозницăсем çак кунсенче 195 ми-хĕ çуса тасатрĕç, саплаca тӳрлетрĕç. Колхоз чи паха тырра итем çинчех государствăна пама хатĕрленет. Паянхи куна колхозăн 78 стан урапа ĕçе тухма хатĕр тата 20 урапа тума тытăннă. К. Гаврилов, А. Васильев, И. Семенов колхозниксем ку ĕçе пысăк тимлĕхпе туса пыраççĕ. Июлĕн 19-мĕшĕнче вĕсем татах та пĕрер стан урапа турĕç. Колхоз июлĕн 17-мĕшĕнче амбарсемпе кĕлетсене тасатса дезинфекцилеме тытăнчĕ.

Паянхи куна икĕ пысăк амбар çĕнĕ тырра йышăнма хатĕр. Çĕнĕ тырра колхоз итем çинчех виçсе шута илет. Кăна тума ответлă весовщиксем уйăрнă. Колхоз хăйĕн государство умĕнчи 1942 çулти обязательствине кивĕ тырăпах татма тăрăшать.

Анчах та «Герой» колхозăн уборкăри ĕç планĕнче машинăсемпе туллин усă курасси тĕп вырăн йышăнманни палăрать. Колхозăн тĕштырăсем пурĕ 758 гектар пулсан тата 4 жнейкăпа пĕр комбайн ĕçлемелле пулсан, планра тĕштырăсене жнейкăсемпе мĕнпурĕ те 150 гектар çеç, комбайнпа 200 гектар çеç пухса кĕртме палăртнă. Ытти 400 гектар çинчи тырăсене колхоз алăпа пухса кĕртме палăртнă тунă. Çакă вăл пирĕн шутпа тĕрĕс мар. Кунта машинăсемпе ĕçлесе тырăсене хăвăртрах пуçтарса кĕртессишĕн тăрăшманни, машинăсене тивĕç хак паманни палăрать. Колхозăн жнейкăсемпе ĕçлеме машиноведсем хатĕрлемелле, ку ĕçе хĕрарăмсене те вĕрентмелле.

Шкул ачисем колхоз производствинче

СĔНТЕРВĂРРИ. Ялхуçалăхĕнче ĕçлес тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва тухса, пирĕн районри шкулсен аслă класĕсенче вĕренекен ачасем çуллахи вăхăтра кашни 50—80 ĕçкунĕнчен кая мар тума, дисциплинăллă пулма, культурăллă-массăллă ĕçе активлăн хутшăнма сăмах пачĕç. Вĕсем халь хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Тислĕк тăкас, çум çумлас, силос хывас, утă пухас ĕççене 1.600 ача хутшăннă, вĕсем 15 пин ĕçкунĕ ытла тунă. Уйрăмах Шуршăлти туллимар вăтам шкулта (директорĕ Романов юлташ) вĕренекенсем тата вĕсен учителĕсем колхоз производствинче тăрăшса ĕçлеççĕ. Учительница Тихонова 100 ĕçкунĕ ытла тунă. Амачкинори шкулта вĕренекен 7 ача 360 ĕçкунĕ тунă.

Сĕнтĕрвăрринчи вăтам шкулта вĕренекен 60 ачана виçĕ отряда уйăрнă. Çав отрядсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра çум çумлас тата авăн çапас тĕлĕшпе хастарлă ĕçленĕ. Шкул ачисем Флоринский, Будников, Чернышев, Ефимова, Масленникова, Лебедева, Смирнова, Чернышева т. ыт. те колхозри ĕççене юратса туса пыраççĕ. Вĕсем производствăра ĕçленĕ вăхăтра икĕ номер стена хаçачĕ кăларчĕç, хаçатсенчи статьясене ушкăнпа пухăнса вулаççĕ.

С. ПЕТРОВ.

15 тонна силос хыврĕç

ӘЛĔК. Хирлепри Буденный ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем выльăх апачĕ ытларах хатĕрлес тесе ырми-канми ĕçлеççĕ. Пĕр кунта вĕсем 15 тоннăна яхăн силос хывса хăварчĕç.

М. КУСТИКОВ.

Партбилет илнĕ чух

Умра паян вут-хĕм вылять пулсан та,
Ман пурнăçа савса юрлас килет.
Çĕклентĕр сассăм, сăввăмçăм шăрантăр!
Алла илетĕп эпĕ партбилет.
Çурхи хăват! Умра пек—уçă сывлăм...
Çак чаплă самантра, çак сехетре,
Кăкру çумне шăрçа çакса, çĕршывăм,
Сана чунтан ыталăттăм пĕрре.
Снаряд ӳксен кисреннĕ çĕр-аннемĕн
Пит йывăррăн сывланăн туйăнать.
Туяп, çĕршывăм, сан ыратнине эп,
Паян татах та çывăх эс мана.
Тулта—сĕм каç, тулта—атака шавĕ,
Çурăлаççĕ минăсем. Чĕтрет çĕрпӳрт.
Каларĕ комиссар: «Пире кам авĕ!
Ак, тытăр, партбилет... Хытрах тăн кӳрт
Ылханлă фашиста! Çунтар—кĕллентĕр
Этем сăнне çухатнă тискер чун.
Асра сан пултăр халăх, пултăр—Ленин,
Ăшра вĕретĕр харсăр, çамрăк юн».
Илемлĕ ĕмĕтсем! Чечеклĕ сад пек...
Такам вăй кӳртнĕ пек ман чĕрене.
...Пĕр çеç эп пурнăçа кун пек савсаччĕ
Шывран курсассăн Шупашкар çырне.
Ман вăй—хула, тăван колхоз уйхирĕ.
Вăл—аслă Атăл юхăмĕ пекех.
Аустенитлă хурçă пек эп çирĕп.
Хура вăя эп çĕнĕп пурпĕрех!
Мана кĕтет эп савнă шавлă Днестр,
Пире кĕтеççĕ хаклă тăвансем,
Пăхаççĕ, мăшкăлран çăлма чĕнеççĕ.
Вĕсем патне ман туртăнать чĕрем.
Алра пăшал. Куççем мала пăхаççĕ.
Партбилета, ялав пек, эп çĕклем.
Асра ман пулĕ çак вăрманăн каçĕ,
Пĕчĕк çĕрпӳрт, çулпуçĕ, ват аннем.
Мана эс, парти, тĕрĕс çул кăтартрăн,
Вăй патăн—иккеленмĕп эп текех.
Эс—çăлтăр маншăн, сывлăш, эс—хăват ман!
Ак мĕншĕн эп те санăн пĕтĕмпех.

А. ВАСИЛЬЕВ.

ФРОНТ, 1942 ç

Ют çĕршывсенче

Англи авиацийĕ Рур çине пырса тапăнни

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Рурăн чылай пункчĕсене атакăланă. Атакăн тĕп объекчĕ Дуисбург пулнă. Ун çине 300 бомбардировщик ытла вĕçсе пырса тапăннă. Хулара вăйлă пушарсем тухнă.

Дуисбург Европăри юханшыв çинчи чи пысăк портсенчен пĕри тата Рур таврашĕнчи юханшыв çулĕсен центрĕ пулса тăрать. Унта 300 пин çын пурăнать.

Çакăнпа пĕр вăхăтра бомбардировка тăвакан авиаципе истребительсен соединенийĕсем противникăн Франципе Голландири аэродромĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

Çав мĕнпур операцисенчен 13 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Июлĕн 21-мĕшĕнче каçхине Англи истребителĕсен нумай йышлă эскадрильисем противникăн войскисене, транспорт средствисене тата Франципе Бельгин оккупациленĕ районĕсенчи çыран хĕрринчи артиллерин позицийĕсене аялтан вĕçсе пырса атакăланă.

Англи бомбардировщикĕсем кун каçиччен Çурçĕр-Хĕвеланăç Германин тĕрлĕ объекчĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

Англи авиацийĕ Дуисбург çине тапăнни çинчен тĕплĕн пĕлтерни

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Дуисбург çине пырса тапăннă чухне хула çине тĕрлĕ калибрлă бомбăсем 25.000 килограмм пăрахнă пулнă. Хулара тата доксен районĕнче вăйлă пушарсем тухнă. Çав тапăнура пулнă летчиксем тапăну питех те ăнăçлă пулса иртнĕ пирки иккĕленмеççĕ.

Германин Ла-Маншри суднисем çине тапăнни

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). Англин тинĕс министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин çыран хĕрринчи çăмăл суднăсенчен тăракан пысăк мар патрулĕ ĕнер ирхине противникăн пысăк грузовой пароходĕ çине, хĕçпăшалланнă тральщиксен тата сывлăшран килсе тапăнинчен сыхланма вăйлăн хĕçпăшалланнă суднăсен эскадри çине пырса тапăннă. Çав суднăсем Ла-Манш тăрăх грузсем турттарса тухма хăтланнă пулнă. Çапăçу вăхăтĕнче неприятелĕн пĕр судние вут тивертнĕ, ытти суднăсене, вăл шутрах грузовой парохода та, сиенленĕ. Противникăн ирĕксĕрех каялла таврăнма лекнĕ.

ЕГИПЕТРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле англичансем фронтăн тĕп участокĕнче атака тунă. Кун каçиччен фронтăн пĕтĕм талккишĕнче вăйлă çапăçусем сарăлса кайнă. Пуçарулăха англичансем хăйсен аллинче тытаççĕ.

Çурçĕрти участокра малалла куçса, англичансем Тэль-Эль-Эльза сăрчĕсен хысакне пĕтĕмĕшпех йышăнса илнĕ. Кăнтăрта импери войскисем çавăн пекех кăштах хĕвеланăçнелле куçнă. Фронтăн пур участокĕсенче те противник контратакăсем тăвать.

Англи авиацийĕ уйрăмах пысăк активлăх кăтартнă. Вăл противникăн транспорчĕ пухăнса тăнă вырăнсем çине, противникăн пехоти çине, Крит утравĕн районĕнчи суднăсем çине, Тобрук гаванĕ çине тата Мерса-Матрух çине бомбăсем пăрахнă. Противникăн портри сооруженийĕсене тата гаваньре тăракан суднисене пысăк сиен кӳнĕ.

АМЕРИКА ВОЙСКИСЕМ ÇУРÇĔР ИРЛАНДИЕ ПЫНИ

НЬЮ-ИОРК, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Ирландие Америкăн авиаци чăçĕсемпе войскисем пырса çитнĕ.

АНГЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ÇУРÇĔР ТИНĔСĔНЧЕ, ЛА-МАНШРА ТАТА БИСКАЙ ЗАЛИВĔНЧЕ ПУЛĂ ТЫТМА ЧАРНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 21-мĕш. (ТАСС). Англин тинĕс министерстви çапла пĕлтерет: Çурçĕр тинĕсĕнче, Ла-Маншра тата Бискай заливĕнче суднăсене çӳреме хăрушши çинчен асăрхаттарнă пулин те, çав шывсем çинче пулă тытмалли суднăсем, противник оккупациленĕ портсенчен тухса килекенскерсем, çӳренине палăртнă. Çав суднăсемпе противник вăрçă ĕçĕнче усă курнă пирки, Англи правительстви кăтартнă районсенче пулă тытма чарасси çинчен пĕлтернĕ тата кунпа пĕрлех июлĕн 24-мĕшĕнче 24 сехетрен пуçласа çыран хĕрринчи шывсенчен аяккалла тухакан суднăсем хăйсене хăрушлăх умне тăратни çинчен асăрхаттарнă.

ЮГОСЛАВИ ПАРТИЗАНĔСЕН ĂНĂÇЛĂ КĔРЕШĔВĔ

ЖЕНЕВА, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). Югославин партизанла çарĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, партизансем хаяр çапăçусем хыççăн Любушки хулине йышăнса илнĕ. Босански краинăра кĕрешекен отрядсем, çĕрле пырса ăнăçлăн штурмласа, Приедор хулине тытса илнĕ. 1.200 çынран тăракан гарнизона тыткăна илнĕ. Партизансен аллине хĕçпăшалсем нумай лекнĕ.

Нимĕçсемпе итальянецсен пысăк чăçĕсем артиллерипе авиаци пулăшса тăнипе партизансен наступленине чарса лартма хăтланнă, анчах вĕрăм вăхăт хушши пынă вăйлă çапăçусем хыççăн вĕсен ирĕксĕрех каялла чакма лекнĕ.

Юлашки кунсенче халăх пурăнакан çĕнĕ пунктсем чылай тытса илнĕ, вăл шутра Острава ятлă чугунçул станцийĕ те пур. Мостарпа Сараево хушшинчи чугунçул магистралĕ çинче партизансем 4 кун хушшинче 40 паровоза сирпĕнтерсе янă.

Халĕ çапăçусем хĕвелтухăç Боснире пыраççĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, кунта нимĕç оккупанчĕсене 500 çынна ытла пĕтерсе тăкнă, бронепоезда тата тимĕр руди тиенĕ 10 вагона сирпĕнтерсе янă. Трофейăсем тытса илнĕ.

ЭГЕЙ ТИНĔСĔНЧЕ ТУРЦИ СУДНИ ÇИНЕ ТАПĂННИ

АНКАРА, июлĕн 22-мĕш. (ТАСС). Июлĕн 19-мĕшĕнче Турцин моторлă судние, Измиртан Чанаккала еннелле продовольстви турттарса пыраканскерне, кĕтмен çĕртен çар катерĕ атакăланă. Катер судно çине хĕçпăшалран пеме тытăннă. Суднăн ирĕксĕрех Турци çыранĕ патне тухса чарăнма лекнĕ.

Вырăнти лайăх пĕлсе тăракан çынсен ушкăнĕнче çапла калаççĕ: Турцин судни çине пенĕ çар катерĕ, паллах, тĕнĕл держависен тинĕс-çар вăйĕсен судни пулнă. Вăл Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнче операцисем туса çӳренĕ, унăн бази Греци утравĕсем çинче пулмалла, теççĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Истори памятникĕсене ишсе пĕтернĕ

Истра хулинче (Мускав облаçĕ) темиçе çул хушши А. П. Чехов пурăнса ĕçленĕ. Фашистла варварсем Чехов çуртне пĕтĕмпех çунтарса янă. Вĕсем ĕлĕк земствăн пулнă больницăна та çунтарса янă, çав больницăра Чехов чирлисене пăхнă, унта вăл хăйĕн «Хирургия» ятлă чаплă калавне çырма шухăш тытнă.

Нимĕçсем каялла чакнă чухне Ново-Иерусалимски текен монастыре сирпĕнтерсе янă. Историн çав питĕ чаплă памятникне нимĕçсем ванчăк купи туса хунă. Анчах та вăл халь те музеех-ха. Ĕлĕкхи краеведени музейĕн сотрудникĕсем экскурсантсене мина хирĕ урлă çав ишĕлчĕксем патне илсе пыраççĕ те унта ĕлĕк мĕн-мĕн пулни çинчен каласа параççĕ. Унта 7.000 экскурсант ытла пырса курнă ĕнтĕ, унта пуринчен ытла Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем тата политработникĕсем пулнă.

Отзывсен кĕнекинче Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсен пĕр ушкăнĕ кĕскен те чĕрене тивмелле çапла çырса хăварнă: «Мĕн те пулсан калама питĕ йывăр. Пĕр шеллемесĕр, хаяррăн тавăрас пулать», тенĕ. (ТАСС).

ТЫРĂ ВЫРМА ТУХНĂ ÇЕРЕ — МАШИНĂСЕМ

Ялхуçалăх машинисем тăвакан заводсем тырă вырма тухма ялхуçалăх машинисем тата вĕсем валли запаслă пайсем туса кăлараççĕ. Жнейкăсем тата тракторпа турттармалли культиваторсем нумай тиесе янă ĕнтĕ.

Сельмаш завочĕсем августăн 15-мĕшĕччен комбайнсем, сенокосилкăсем, лобогрейкăсем, сортировкăсем валли засаплă пайсем 10 миллион тенкĕлĕх туса кăлармалла. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧЕБТОРГУ СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ

на постоянную работу столяры, сапожники, ученики столярного и сапожного дела и агенты по скупке домашних вещей.

Зарплата по соглашению.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Ленина, д. № 11, отдел кадров. Тел. 2—26.

3—3.

Республиканская контора Заготживсырье

доводит до сведения заинтересованных учреждений и предприятий, что контора приступила к заключению договоров на продажу живых племенных кроликов для организации кроликоферм при подсобных хозяйствах.

Заявки принимаются ежедневно до 25 июля с 9 ч. до 14 час.

Справки выдаются там же. Телефон 2-61. Адрес: ул. Ленина, 31, Республиканская к-ра «Заготживсырье».

2—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.

ЛТ 891